• *Раççей историйĕн çулталăкĕ*

Шаккур шаккаса кĕме юратман

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 178, 179-мĕш номерсенче/.

Шаккур Чутейрен 15-20 çухрăмра вăрă ĕçне тума «именни», чылай ялта табу /чăрмав/ туса хуни çиннен çыртăмăр ĕнтĕ. Комсомольски районĕнчи Тукай табу çук ялсен шутне кĕнĕ. Табу çук кашни ялтах Шаккурăн шаннă çынни пулнă. Вăл ăçта, хăçан, камăн лашине вăрламаллине кăтартса тăнă. Тукайра ку ĕçе Миххал Хамитов текен çын туса тăнă. 1925 çулта ял çыннисен 167 лашапа 14 тиха пулнă. Пĕр лашаллисем 76 кил шутланнă. 37 кил иккĕр лаша тытнă. Пилĕк килте виçшер лаша усранă. Ултă килти чухăн лаша тытмалăх вăй ситереймен.

Миххал Выçли кассинчи ашшĕ килĕнчен уйрăлса тухса /Мăрат касси, Выçли касси, Хĕреслĕ урам – Тукайри чи ватă урамсем/ Малти касăн Чурачăка тухса каякан вĕçĕнче çурт лартнă. Вăл вĕçкĕн, куштан, тулăксăр этем пулнă. Ĕçкĕпе иртĕхнĕ, ĕçлеме юратман, чĕрре кĕрсе çын çине алă çĕклеме те именмен. Канти Ульяни текен юхха хĕрарăмпа çыхланса çĕрлехи вăхăта ун патĕнче ирттернĕ /«Тăван Атăл» журналăн кăçалхи 7-мĕш номерĕнче эпĕ Миххал Портушкинсемпе кăршĕллĕ пулнă тесе тĕрĕс мар информаци панă. Çаваннăн вулакансенчен каçару ыйтатăп. Портушкинсемпе юнашар шăпах Канти Ульяни пурăннă/.

Хамитовпа Шаккур мĕнле паллашни пирĕншĕн паллă мар. Ял çыннисем çак икĕ хурах пĕр-пĕрне паллани пирки нимĕн те пĕлмен. 1923-1925 çулсенче Тукайран темиçе лаша вăрласа кайнă. 1925 çулхи çуркунне икĕ ăйăр çухалать. 1921 çулхи выçлăх хыççăн йăшса юлнă ялта ăйăр нумай пулман. Миххалран инçе мар, урамăн тепĕр енче вăтăра çитнĕ арçын Мăтюк Шурбин /хăйне вăл тепĕр чухне Абросимов тесе те çыртарнă/ арăмĕпе тата иккĕри ывăлĕпе пурăннă. Унăн ĕç лаши пулнă, унсăр пуçне вăл çамрăк ăйăр çитĕнтернĕ. Шала вăррисем хăйĕн картишне пырса кĕресрен Мăтюк /Дмитрий Абросимович Шурбин/ питĕ шикленнĕ. Çу уйăхĕн вĕçĕннен пуçласа авăн уйăхĕн вĕçĕччен вăл çĕрлехи вăхăта кĕлет айĕнче çывăрмасăр ирттерет. Сыхлать. Вăрăсем килессе кĕтет. Авăн уйăхĕн сулхăнĕ те ăна пӳрте хăваласа кĕртеймест. Çутă уйăхлă пĕр лăпкă çĕр, ире хирĕç, унăн картишне вăрăсем кĕреççĕ. Икĕ кĕрепенкĕ çурă йывăрăшлă çăра вите умне палт! çеç татăлса ӳкет. Тимĕр сăлăп пĕр сассăр вите хăмине тăрăнать. Кĕçенме юратакан çамрăк ăйăр та сасă кăлармасть, ăна йĕвен тăхăнтартса витерен илсе тухаççĕ. Вăрăсем – виççĕн. Уйăх çутинче кăнтăрлахи пекех курăнаççĕ вĕсем. Иккĕшĕ кĕске атăпа, çĕлĕкпе. Виççĕмĕшĕ вăрăм кунчаллă атăпа, сăран карттуспа. Мăкăр-мăкăр каласаççĕ. Ай, атьсемри! Чăвашлах калаçаççĕ-çке. Сăран карттусли чисти Хамить Миххали пек. Çавă пулмасăр, çавă! Карттусĕ те, атти те çаван. Иккĕшĕ тутар пулни паллă. Мăтюк кĕлет айĕнчен тухмасть. Тухса шăв-шав хускатсанах хăйне кăнтса пăрахасса лайăх пĕлет вăл.

Ирхине вăл хăйĕнпе хирĕçле икĕ-виçĕ кил урлă пурăнакан Хамить патне каять.

– Миххал килте çук. Ĕнер каçхине Йĕпреçе тырă сутма кайрĕ. Мĕн тумаллаччĕ? – ыйтать Хамить арăмĕ Мăтюкран.

Хамить, чăнах та, каçхине, тĕттĕм пулсан, лаша кӳлсе лавĕ çине тырă миххисем хурать, хапхине уçса шăхăра-шăхăра Йĕпреçе тухса каять. Çакна кӳршисем те сисеççĕ. Хальхи Вутлан /ун чухне ку ял пулман/ тĕлне çитсен лавне вăрман уçланкине лартать, лашине тăварса каялла Тукая вĕçтерет, унта лаша вăррисене кĕтсе илет. Ăйăрне вăрлаттарса янă хыççăн Миххал лашине каялла Йĕпреç çулĕ çине хăвалать, лавне кӳлсе çитес çĕре çитме васкать. Пасар пуçланнă вăхăталла вăл Йĕпреçе çитет. Акă ĕнтĕ сана алиби текенни.

Мăтюк çывăх тăванĕсемпе юлташĕсене пустарса пилĕк юлан утпа Чугее тухса каять. Вăл вăхăталла Шаккура арестленĕ ĕнтĕ. Допрос епле пынине кура лаша вăррисене те пĕрерĕн-пĕрерĕн арестлесех тăнă. Чутей мишерĕсем Мăтюк ушкăнне хĕнеме тапăнаççĕ, Тукайсем аран-аран тарса хăтăлаççĕ.

Каçхине Миххал Йĕпреçрен тырă сутса таврăнать. Пасарта ăна Тукайсем те курнă. Çавăнпа та Мăтюк яла кăларнă сăмах суя пек пулса тухать.

Çапах та Мăтюк хăй сăмахĕнчен чакмасть. Миххал ăна вĕлерме шухăшлать. Кӳршĕрех пурăнаканскер – Мăтюк кĕни-тухнине асăрхасах тăрать. Майлă самантпа усă курса хыçалтан пырса ăна тимĕрпе пуçĕнчен кӳплеттерет. Пуçĕ çурăлнине курнă пулсан та тата темиçе хут çапать. «Тинех вилчĕ иккен», – тесе пăрахса каять. Чăтмалла мар йывăр аманнă пулсан та Мăтюк вилмест. Ăна Шурут пульницине илсе каяççĕ. Икĕ уйăх выртать Шурбин ку пульницăра. Калаçаймăн пулнă, чĕтрекен пуçлă, хăрăк алă-уралла çынна килне илсе таврăнаççĕ.

Вулăс кантурĕ ун чухне Тукайран пĕр çухрăм çурăри, Çĕнĕ Мăратра пулнă. Çав çулсенче вулăс территорийĕнче /унта 23 ял кĕнĕ/ Калюков банди алхасма тытăнать. Хурахсем Александровпа тепĕр хастар милиционера вĕлереççĕ. Вулăс ĕçтăвкомĕн председателĕ Семен Кирилловичĕ Кириллов уеса кайнипе усă курса унăн хваттерĕн алăкĕсене тултан питĕрсе вут тĕртеççĕ. Вутра Кирилловăн арăмĕпе икĕ ачи тата унăн йăмăкĕн хăнана пынă ывăлĕ çунса вилеççĕ.

Следстви лаша вăррисене те, Кириллов хваттерне вут тĕртнĕ хурахсене те тупаймасть.

Мăтюк килте шултăркаса выртать. Миххал унченхинчен те ытларах иртĕнме тытăнать. Кĕрхи çĕрсене вăл килте мар, Канти Ульяни патĕнче ирттерет. Вăтăрти Мăтюкăн çывăх юлташсем пулнă. Вĕсем камсем иккенне эпир пĕлместпĕр. Пĕлсен те çырма кирлех мар пулĕ. Вĕсем Миххала савнă хĕрарăмĕ патĕнче сыхлама пуçлаççĕ. Миххал картишне çур çĕр иртсе икĕ сехетре тухать. Унăн пуçĕ çине тӳрех икĕ тимĕр чукмар анать. Пуç мими сирпĕнсе тухать. Сыхлакансем Миххал вилнине пĕлсен çеç картишрен тухса каяççĕ.

Тепĕр куннех Тукая Хусан милицийĕн çыннисем пырса çитеççĕ. Шаккур, хăйне асаплантарнă май, вăрттăнлăхсене уçсах пынăмĕн. Лаша вăррисен ячĕсем те, шаннă çынсен хушамачĕсем те ерипен утаманăн чĕлхи çине килеççĕ. Пĕр допросра вăл Михаил Хамитовăн ятне те асăнать. Прокурор пĕр тăхтаса тăмасăр Хамитова арестлесси пирки документ хатĕрлет, милици çыннисене командировкăна кăларса яраççĕ.

Тукая пĕр талăк маларах çитнĕ пулсан милици Хамитова арестлесе тытса кайма пултарнă. Халĕ ĕнтĕ вăл тупăкра выртать, ыран ăна пытараççĕ.

Эпĕ çырни калав-повеçри пек пулса тухнишĕн тĕлĕнме кирлĕ мар. Çак фактсем пирки эпĕ пĕтĕмпех хам илтнĕ. Ача чухне пирĕн кӳршĕре 14 çулти Шушкă Тули ятлă çамрăк пурăнатчĕ. Вăл ялти пăру кĕтĕвне кĕтетчĕ. Пĕччен кĕтӳ çӳретме ăна йывăрччĕ. Хăйĕнпе пĕрле час-часах мана илсе каятчĕ.

Пĕррехинче çапла пăру кĕтĕвне ял хĕрринче Ехвин Егорч текен çын хуçалăхĕн таврашĕнни хура пусра икĕ эрне кĕтрĕмĕр. Пирĕн патăмăра кашни кунах çакăнган инçетре мар пурăнакан Мăтюк пичче пыратчĕ. Евтук аппапа иккĕшĕ çитмĕлтен иртнĕччĕ ĕнтĕ, колхозра ĕçлеме пăрахнăччĕ. Мăтюк пичче мĕн калаçнине эпĕ ăнланаймастăмччĕ, Туля чухлатчĕ. Эпĕ шăрăхран таракан пăрусене хăвалаттăм. Туляпа Мăтюк пичче сехечĕ-сехечĕпе каласатчĕç. Мăтюк пичче мĕн пĕлтерни пирки кайран Туля мана каласа паратчĕ. Çакна пĕтĕмпех вăл каласа панине аса илсе çыратăп.

Миххала кăнтнă хыççăн арăмĕ нумаях пурăнайман. Унăн тĕреклĕ хуçалăхне Сатин Тихăнĕ туянса юлнă. Халĕ кунта Тихăн хĕрĕ Клавти хăйĕн ывăлĕн çемйипе пурăнать. Мăтюк пиччепе Евтук аппа сакăр вуннăран иртичченех пурăнчĕç пулмалла. Вĕсем вилсен пӳрт вырăнне Коля Крипцов туянчĕ, кирпĕчрен çĕнĕ çурт лартрĕ.

Шаккур эшкерĕ тахçанах арканнă, Калюков бандине те салатнă. Çапах та киревсĕр хăшпĕр йăла юлнă-ха. Лаша вăрласси пачах пĕтнĕ теме çук. Çулталăкне республикипе нумай мар, анчах та пилĕк-ултă тĕслĕх пулатех-мĕн. Халĕ лаша мар, çăмăл автомобиль вăрлаççĕ. Республикăн шалти ĕçсен министрĕ пĕлтернĕ тăрăх – çăмăл машина вăрлани кашни кун тенĕ пекех. Çулталăкра 365 кун. Апла пулсан çав 365 кунра 400 машинăран сахал мар вăрлаççĕ.

Çав машинăсен кантăкĕсене ватса шалти япалине вăрлани тата нумайрах. Кăçалхи çур çулта çеç ун пек тĕслĕх 417 хутчен пулнă. Пурнăç улшăннă май вăрлас-çаратас объектсем, çак ирсĕрл�екĕн майĕсем ылмашăнса пыраççĕ. Машина хăвалакансемпе, салонри япаласене вăрлакансен йышĕнче хĕрарăмсем те пур.

Мораль, кăмăл-сипет аталанăвне, Раççей обществи цивилизаци çулĕ çине тăнине кĕтсе илепĕр-ши хăçан та пулин?

■ **Геннадий УТКИН,**
тавра пĕлӳçĕ

• *Футбол*

Çĕнтерӳшĕн çапла кĕрешеççĕ

Республикăри футбол чемпионачĕн вун тăваттăмĕш турĕнче ăмăрту лидерĕ Шупашкарти «Динамо» Çĕнĕ Шупашкарта «Спутник-ДЮСШ №1» командăпа тĕл пулчĕ. Динамовецсем, ку тур умĕн «Химик-Августа» выляса янăскерсем, турнирти кайри вырăнсенчен пĕринче пыракан командăна çĕнтерес тесех вăйăа тухрĕç. Пĕрремĕш тайм варринче вĕсем хăйсен тĕллевне пурнăçа кĕртрĕç. Хăйсен хапхине мечĕк кĕрттернĕ хыççăн Çĕнĕ Шупашкарсен вăй хушăнчĕ тейĕн: вĕсем хастарлăха ӳстерчĕç те вăйă шутне танлаштарчĕç. Кĕçех тепĕр мечĕк тапса кĕртсе мала тухрĕç.

Каннă хыççăн кил хуçисем вăйă шутне сыхласа хăварас тесе лайăхрах хӳтĕленме тăрăшрĕç. Апла пулин те «Динамăн» тапăнса выляканĕ Кирилл Иванов мечĕк валли вĕсен хапхинче вырăн туприех. Хăнасен мала тухма та май пулнĕ, анчах кил хуçисен голкиперĕ Кирилл Иванов тапса янă мечĕке сирсе яма пултарчĕ. Çапах та «Динамо» тĕл пулăва çĕнтерӳпе вĕçлеме майне тупрĕ, вăйă вĕçленес умĕн Максим Иванов виççĕмĕш мечĕке тапса кĕртрĕ – 3:2. Çĕнĕ Шупашкарсене выляса янăшăн ӳпкелеймĕн, вĕсем хăйсенчен мĕн килнине турĕç, лидер вара çĕнтерӳçĕн мĕнле кĕрешмеллине кăтартса пачĕ.

Халĕ «Динамăн» 37 очко. «Химик-Августăн» виçĕ очко сахалрах, вăл килте «Волга-ТАВран» 2:1 шутпа выляса илчĕ. Виççĕмĕш вырăнта пыракан ОМОН «Крылья» командăна 3:1 парăнтарчĕ. ОМОНăн 31 очко. «Тăваттăмĕш вырăнта пыракан «Ибреси-РДЮСШ» килте «Шумерляпа» 1:1 шутпа вылярĕ. Йĕпреçсен – 23, «Крылья» командăн 20 очко.

Улттăмĕш – вуннăмĕш вырăнĕсенче: «Волга-ТАВ» 13, «Чурачики» тата «Шумерля» 12-шер, «Спутник-ДЮСШ №1» тата «СК-Центр-Спартак» командăсем 7-шер очко пухрĕç. Бомбардирсен ăмăртăвĕнче çаксем малта пыраççĕ. Кирилл Иванов, /«Динамо»/ – 15, Роман Шалин /«Химик-Август»/ – 14, Сир Ангат /ОМОН/ – 13, Евгений Краснов /«Ибреси-РДЮСШ»/ 12 мечĕк авторĕсем.

■ **Владимир КРЫСИН**

Платон Павлович ДАВЫДОВА асăнса

66 çула кайса 2012 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче Раççей Ял хуçалăх ăслăлăхĕсен академийĕн çĕр улми хуçалăхĕн Пĕтĕм Раççейри наука тĕпчев институчĕн «Ударник» федераци патшалăх унитари предприятийĕн директорĕ, Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Платон Павлович Давыдов вăхăтсăр вилнĕ.

Платон Павлович Давыдов 1947 çулхи пуш уйăхĕн 10-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Анатри Панкли ялĕнче çуралнă. Хăйĕн ĕç-хĕлне Муркаш районĕнчи «Ленинец» колхозра пуçланă. 1965-1966 çулсенче çар тивĕçне пурнăçланă. 1974 çулта Платон Павловича Муркаш районĕнчи Ильич ячĕллĕ колхоз председательне суйланă. 1979 çулта ăна Муркаш райĕçтăвкомĕн ял хуçалăх управленийĕн пуçлăхне-халăх депутачĕсен Муркаш район канашĕн ĕçтăвкомĕн председателĕн çумне уйăрса лартнă.

1981 çултан пуçласа хăйĕн юлашки кунĕчченех вăл «Ударник» хуçалăха пĕр улшăнмасăр ертсе пынă. Платон Павлович Давыдов çак должноçра вăй хурса Чăваш Енĕн аграри отрасльне çеç мар, пĕтĕм çĕр-шывăнне те пысăк тӳпе хывнă. Вăл тимлĕ ертсе пынăран предприяти çĕр улми тата тĕш тырă культурисем туса илес, çаван



пекех выльăх апачĕ хатĕрлес тĕлĕшпе тухăçлă çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртмелли вырăн пулса тăнă.

Платон Павловича ял хуçалăх ĕçченĕсем тивĕçлипех хисепленĕ. Хăйĕн пурнăçне вăл тăван Чăваш Енĕн агропромышленноç комплексне йĕркелес тата аталантарас ĕçе панă.

П.П.Давыдова Чăваш АССРĕн вун иккĕмĕш суйлаври /1990-1994 çç./ Аслă Канашĕн депутатне, Чăваш Республикин пĕрремĕш /1994-1998 çç./ тата виççĕмĕш /2002-2006 çç./ суйлавсенчи Патшалăх Канашĕн депутатне суйланă.

Ял хуçалăхне пысăк тӳпе хывнăшăн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн П.П.Давыдова «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» орден медалĕпе наградăланă.

Платон Павлович чăн-чăн патриот, çирĕп хуçалăх ертӳçи, ăслă та вăйлă çын пулнă. Унăн ырă ĕç-хĕлĕ – Тăван çĕр-шыва парăннине çирĕплетекен çутă тĕслĕх.

Чăваш Ен Правительстви, республика общественноçĕ чăннипех те питĕ лайăх çын вилнĕ пирки унăн çемйипе, тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтереççĕ.

Платон Павловичăн çутă сăнарĕ яланах пирĕн чĕресенче упранĕ.

М.В.Игнатьев, Ю.А.Попов, И.Б.Моторин, А.С.Иванов, С.В.Павлов, А.В.Самойлова, М.Г.Ноздряков, С.А.Енилина, Н.В.Малов, И.В.Николаев, Р.Н.Тимофеев, В.Х.Дубинин, А.И.Кушков, П.В.Ивантаев.

* * *

П.П.Давыдовпа 2012 çулхи авăн уйăхĕн 18-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Йӳçкасси ялĕн культура çуртĕнче сыв пуллашаççĕ. Граждан панихиди 11.30 сехетре пуçланать.

ПРОДАЮ

2.Предлагаем по фабричным ценам в рассрочку: стенки, прихожие, спальни, шкафы, комоды, кровати, матрацы в магазине «Балахнинская мебель». Сборка, доставка. А.: Чеб., Гагарина, 11 /напротив Русского драмтеатра/. **Тел. 56-41-21.**

6.ТОРФ, ПЕСОК, грав-массу. Т. 8-927-845-26-01, **37-96-10.**

8.Гравмассу, песок, щебень, торф, кирп. бой, **керамблок** от производителя. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

9.Керамблоки /20х20х40, 12х20х40/, **цемент, керамзит.** Т.: 89050284130, 89033462293.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул, листовую, трубы профильные, водостоки, дымоходы. Доставка. **Т. 44-44-33.**

17.Блоки керамзитобетонные 20х20х40. Т. 8-905-027-25-55.

23.Сетку-рабицу от производителя более 80 видов, **сетку** сварную более 30 видов, профнастил, гвозди, столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

25.Гравмассу, керамблок, песок, торф. Доставка. Т. 8-902-327-75-85.

33.Брусчатку, тротуарную плитку, бордюры. Тел. /8352/ 366819.

71.ПИЛОМАТЕРИАЛ любой, **срубы** в наличии и на заказ, **дрова,** горбыль. Т. 8-903-389-14-00.

99.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА. Низкие цены. Замер, доставка – бесплатно. Т. 8-987-576-65-62.

291.Профнастил, металлочерепицу, **сайдинг,** водостоки. Доставка, монтаж. Т. 89053445186.

300.Гравмассу, песок, **щебень,** торф, **керамзит.** Т. 89276694148.

355.Песок речной, карьерный, **щебень, гравмассу, торф** и т.д. Дёшево. Доставка. Т. 89613409305.

465.Керамблоки, куски бетона и свая, **ОПГС,** бой кирпича для фундамента. Т. 89063814420.

593. Поменяй до зимы старые на новые, установи теплые **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА** и железные двери. **Скидки. Т. 89276687342.**

РАБОТА

607.Требуются рабочие строительных специальностей. Оплата своевременная. Соц. пакет. **ООО СК «БИЗНЕСПАРТНЕР».** Тел.: 89674747666, 89656888666.

УСЛУГИ

13.Бурение колодцев, скважин; **колодезные кольца,** бордюры, **керамблоки.** Доставка. Т.: 8-965-685-89-75, 8-927-668-96-96.

54.Лечение алкоголизма с 9 до 17 час., кроме воск. А.: Чебоксары, Энгельса, 2. **Т. 621184.** Лиц. 21-01-000772 МЗ ЧР. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

505.Бурение скважин на воду. – 1550 руб./м. Т. 8-905-344-54-52.

КУПЛЮ

602.Дом с земельным участком. Тел. 8-927-667-07-63.

САНАТОРИЙ «НАДЕЖДА»

УВАЖАЕМЫЕ ТРУЖЕНИКИ СЕЛА!

Санаторий «Надежда» поздравляет Вас с окончанием осенних полевых работ и предлагает осенние скидки.

Только с 20 по 30 сентября 2012 года стоимость путевки на 10 дней – 14000 рублей!

В стоимость включены проживание, питание, лечение.

К ВАШИМ УСЛУГАМ:

- уникальные методы лечения различных заболеваний;
- 4-х разовое питание /заказное меню/;
- сауна 2 раза в неделю; • бассейн ежедневно.

Справки по тел.: /8352/ 77-27-35, 78-86-86.

г. Новочебоксарск, ул. Набережная, 46.

Тавтăватăп

Чăваш Ен çут çанталăк ресурсĕсемпе пуян мар, анчах, манăн шухăшăмпа, унăн тĕп капиталĕ – кадрсем. Эпĕ строительсемпе, приборсем тăвакансемпе, культурăпа искусство членĕсемпе, республикăн ĕçчен ытти çыннипе мăнаçланатăп. Юлашки 10 çул хушшинче шăпа мана сывлăх сыхлавĕнче вăй хуракан специалистсемпе çинеçинех тĕл пулмалла турĕ. Акă юлашки тĕслĕх.

Кăçалхи çурла уйăхĕн 21-мĕшĕнче кĕтмен çĕртен хырăмлăхри суран хăйĕн çинчен аса илтерчĕ, юн вăйлă кайма пуçларĕ. Васкавлă медпулăшу тата реанимаци уйрăмĕ лайăх ĕçленине пула мана хăвăрт тата ăнăçлă медпулăшу кӳчĕç. Темиçе кун хушшинче сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕсем чăн-чăн профессионалсем пулнине, пĕлсе ĕçленине, медперсонал пациентсемпе питĕ тимлĕ пулнине курса ĕнентĕм. Реаниматологсемшĕн мĕн пур пациент пĕр тан, вĕсем кашни пурнăçшăн талăкĕпех кĕрешеççĕ. Ирсерен БСМП тĕп врачĕ хăй кашни тĕслĕхе тишкерет. Тавах пурне те – чĕрĕ юлтăм. Халĕ сиплеве хирурги уйрăмĕнче малалла ăнăçлă тăсатăп.

Çак çулсенче хам курса ĕненни, ырри, çинчен калас килет. Хулан тĕп больници /Строительсен/, Хулан 1-мĕш больници /Трактор тăвакансен/, Хулан 5-мĕш больници /Çурçĕр хĕвел анăç/, Федерацин травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕ, Республикăн кардиологи диспансерĕ, Республикăн эндокринологи диспансерĕ, Республикăн клиника больници – вĕсенче пациентсене сиплесси, чирлисемшĕн тăрăшасси тĕп тĕллев. Эпĕ танлаштарма пултаратăп – Европăри чаплă оборудованипе тивĕçтернĕ больницăсенче те пулнă. Пирĕн медицина кадрĕсем Европăринчен лайăхрах – çынлăхпа, ăшă кăмăлпа уйрăлса тăраççĕ.

Тавах сире!

■ **Анастас НИКОЛОВ.**
Шупашкар хули

Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70. 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

Саламлатпăр

Пирĕн юратнă аппа, йăмăк – Çĕрпӳ районĕнчи Мăнçут ялĕнче пурăнакан Дина Леонидовна ИВАНОВА – паян, авăн уйăхĕн 18-мĕшĕнче, 55 çул тултарать. Сумлă çак юбилейпе эпир ăна пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей, ăнăçу, тăнăç пурнăç сунатпăр. Ĕмĕтӳ пурнăçланса пытăр.

Ивановсем, Антоновсем, Фроловсем, Александровсем тата ытти тăванĕ.

* * *

Юратнă та хаклă çыннăмăр – Патăрьел районĕнчи Тури Чакă ялĕнче пурăнакан Валентина Дмитриевна ФРОЛОВАНА – 50 çулхи юбилейпе чун-чĕререн саламлатпăр.

Юман пек çирĕп сывлăх, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр. Хастарлăху нихăçан та ан иксĕлтĕр, ĕмĕр сукмакĕ такăр та вăрăм пултăр.

Мăшăрĕ, 3 ывăлĕпе кинĕсем, сывăх тăванĕсемпе куммăшĕсем.

БЕТОН
от производителя
Доставка по республике
(8352) 36-49-00, 44-65-34
г. Чебоксары, Ишлейская т-р, 13 ООО «Интертехпрессмаш»

Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"
КИРПИЧ
ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ
более 500 видов
Тел. 35-35-51, 34-35-[illegible]
Ул. г. Чебоксары, Канашское ш., 11

УСЛУГИ БЕНЗОВОЗА
объем 10200 л.
ПРОДАЖА ГСМ
Возможна доставка.
Тел. /8352/ 37-15-57, 63-53-79.

ВНИМАНИЮ сельскохозяйственных организаций, крестьянских /фермерских/ хозяйств и личных подворий

С 15 сентября по 21 октября 2012 года на торговых площадках городов Чебоксары, Новочебоксарск, Алатырь, Канаш, Шумерля **открывается ЯРМАРКА по продаже сельскохозяйственной продукции «ДАРЫ ОСЕНИ».**

Приглашаются производители сельхозпродукции. Торговые места предоставляются бесплатно.

Муркаш район администрацийĕ Раççей Федерацийĕн тата Чăваш АССР ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Муркаш районĕн Хисеплĕ гражданинĕ, Раççей Ял хуçалăх ăслăлăхĕсен академийĕн çĕр улми хуçалăхĕн Пĕтĕм Раççейри наука тĕпчев институчĕн «Ударник» федераци патшалăх унитари предприятийĕн директорĕ

Платон Павлович ДАВЫДОВ

вилнĕ пирки тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

«Патшалăх чăваш агрохими службин центрĕ» федерацин патшалăх бюджет учрежденийĕн коллективĕ Раççей Ял хуçалăх академийĕн «Ударник» федераци патшалăх унитари предприятийĕн директорĕ

Платон Павлович ДАВЫДОВ

вăхăтсăр вилнĕ пирки тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтерет.

«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ авăн уйăхĕн 20-мĕшĕнче тухать.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Тĕп редакторшăн
М.М.АРЛАНОВ

Номер редакторĕ **Г.А.МАКСИМОВ**

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
Т.В.ИЛЬИНА /яваплă секретарь/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.Х.ЛУКИЯНОВА, Н.Г.СМИРНОВА

ТЕЛЕФОНСЕМ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.

Электрон почта:
pop408@rambler.ru
hypar@chtts.ru

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРЎСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Тираж 7009. Заказ 3415.

Тем те пĕр

• Америкăри Флорида штатĕнчи Крейг Грант хăйĕн 10 гектар çĕрĕ çинче кушаксене чăн-чăн çăтмах туса панă. Унта пĕчĕк çуртсем те, пĕве те, шыв вăйăпе ĕçлекен арман та пур. Юлашки 9 çулта Крейг килсĕр-çуртсăр 500 кушака хӳтлĕх панă, ĕçлесе илнĕ пĕтĕм укçине вĕсене усрама тăкаклать.

• Йывăрлăхсене пăхмасăрах Китайра хуласенче пурăнакан халăх йышĕ питĕ хăвăрт ӳсет. Çакăн пек ӳсĕмпе 2025 çул тĕлне Китайра миллион çын пурăнакан 219 хула пулĕ /Европăра паян унашкаллисем 35 çеç/, 5 миллион çын пурăнаканнисем 24-а çитĕç. Тепĕр тесен, китайсем халех цифрăсемпе тĕлĕнтереççĕ – унта кашни çулах апат çинĕ чухне пĕр хут усă курмалли 15 миллиард пĕчĕк патак кăларса пăрахаççĕ. Вĕсене хатĕрлеме 25 миллион йывăç касаççĕ.

• Американсем çеç кола тутиллĕ шурă эрех шухăшласа тупма пултарнă! Халĕ фри çĕр улми шăршиллĕ трюфель кĕтмелли çеç юлать-тĕр. Сăмах май, шурă эрех-кола 70 градуслă.

• Илья Олейниковпа Юрий Стояновăн «Городок» телекăларăмĕн вун-вун прототип: унченхи ССР Союзĕн территорийĕнче 106 ял-поселок çакăн ятлă. Регионсен хушшинче ку енĕпе Тверь облаçĕ малта – унта Городок ятлă 14 ял.